# ÇĔРШЫВ САНАРĔ

УНАН ĔÇĔСЕНЧЕ республика культурин кучухнехи сăн-сăпачĕ уççăн тухса тăрать. Ана Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕн хисеплĕ ятне тата К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен государство премине пани Владимир Иванович Агеев тунă ӳсĕмсене çирĕплетсе парать. Вăл сăрланă вуншар картинăна, офорта, литографие, тушьпа-перопа ӳкерне ĕçсене çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери чылай выставкăсенче кăтартнă. Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă иксĕр ытла кĕнекене унăн ӳкерчĕкĕсемпе илемлетнĕ, хаçат-журнал валли те художник ӳкерчĕксем нумай тунă.

Художник пултарулăхĕ кĕнеке искусствипе питĕ тачă çыхăннă. Вăл илемлетнĕ кĕнекесенчен чи малтан И. Я. Яковлевăн «Ача-пăча калавĕсем» кĕнекине палăртмалла. В. И. Агеев ӳкерчĕкĕсенче, калавсенчи пекех, чăвашсен авалхи йăли-йĕрки, кăмăл-туйăмĕ тухса тăрать. Халăх пурнăçне юратса, тивĕçлипе хакласа сăнланипе пĕрлех, художник пирĕн культура аталанăвне историри çыхăнусенче кăтартма, аслă просветитель И. Я. Яковлев каланă интернационалла шухăша: кашни халăх хисепе тивĕçлĕ, тенине чăнчăн пулăмсем урлă кăтартма тăрăшать.

Экспозици çакна ĕнентерет: тăван халăх пурнăçне художник фольклора тĕп выранă хурса тĕпчет. «Чăваш халăхĕн юмахĕсемпе преданийĕсем», А. Трофимовăн «Çыруллă кĕпе», Юхма Мишшин «Чăваш юмахĕсемпе мифĕсем» кĕнекисене илемлетме художник паха материал пайтах тупнă. Халăхăн ăстăнне, чун-чĕре илемне, ĕмĕт-туртăмне йышлă сăнарсенче, чăваш тĕррин ӳкерчĕкĕпе тĕссен майлашăвĕнче шырать, ăна профессиллĕ искусство виçине çитерет, çĕнĕ самана ыйтнине тивĕçтерекен сăнарсенче уçса парать, юмах-сăмахра кăна пулнă ырă ĕмĕт-тĕллевсене чăн-чăн пурнăçпа çыхăнтарать.

Художник тăван халăх кунçулне пĕтĕм çĕршыв кунçулĕпе çыхăнтарать. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ, Аслă Октябрь, граждан вăрçи, колхозсем туни; Аслă Отечественнăй вăрçă — историри кашни паллă самант унăн пултарулăхĕнче çырăнса юлнă. «Аслă Таяпа хулашĕ», «Утлă çар атакăра», «Пугачев», «Атăл», «Çĕр» картинăсем А. А. Александров, Н. К. Сверчков тата А. М. Тагаев-Сурбан пуçланă истори живопиçне малалла аталантараççĕ.

Выставкăна тăратнă ача-пăча кĕнекисем, хаçат-журналти сатира ӳкерчĕкĕсем, халăх сăмах-юмахĕнчи сăнарсем, пĕр сăмахпа каласан, художник тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ майпа ăсталама тăрăшнă кашни сăнар кунчухнехи пурнăç интересĕсемпе, вĕсене татса пама мĕн кансĕрлет, çавсене тĕпренех илсе пăрахас тĕллевпе çыхăннă. Юратса ырлани, тарăхса сивлени, ыррипахипе хури-шурине курма вĕрентни, кĕрешӳе тухма чĕнсе çĕнтерме вăй пани, хавхалантарни, чаплă тĕслĕхсем урлă çирĕп ĕнентерни — В. И. Агеевăн выставкăра кăтартакан ĕçĕсен чи паха енĕ.

Нумай произведенире художник сăнарне чăн пурнăçран е сăмах-юмах ытарăшĕнчен илнĕ хĕрарăм сăнарĕпе пĕрле куратпăр. Авалхи грексем е Рубенс ытларах юратнă мифологири сăнарсем чăваш ăстин пултарулăхĕнче хăйсене майлă пулса тухаççĕ. Пĕтĕм халăх авалтан курса пĕлнĕ аллегорисем унăн реалистла пултарулăх меслетне пуянлатса вăй кĕртеççĕ. «Шыври», «Шуйттансем патĕнче хăнара», «Хĕр вăрлани», «Салтака ăсатни» йышши ĕçсенче те, ку чухнехи ял пурнăçне сăнлакан ӳкерчĕксенче те чăн пурнăçпа мифологи палăрăмĕсем тачă çыхăннă, хĕрарăм сăнĕ урлă пурнăç илемне кăтартаççĕ. Пурнăç вăйĕ — пурнăç илемĕ. Çак илеме курма пĕлекен, юратма пултаракан яланах вăйлă, никам çĕнтерейми хăват илет. Художникпа пурнăçăн уйрăлми пĕрлешсе тăмалла, ĕнентерет В. И. Агеев. Хăйĕн ĕçĕнче çак пĕрлĕх пур унăн.

«Нарспи» поэмăра каланăн, этем вăйне ĕненни, Çеçпĕл Мишши сăвăра мухтанă халăхсен туслăхĕ, Петĕр Хусанкай «эпир пулнă, пур, пулатпăр» тени В. И. Агеев выставкин тĕп тĕллевне уçса парать. «Тапăрта», «Кĕтӳçсем» картинăсенче, акă, ялти ятсăр çынсем мар, çĕр çинчи пурнăç йĕркине алăра тытакан улăпсем. Нумай йышлă автопортретсенче паттăрсен сăнĕсем куç умне тухса тăраççĕ. Художник илемлетнĕ кĕнекесен ячĕсенчех авторăн гражданла позицийĕ палăрать. «Тăвăл умĕн», «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», «Ешĕл хунав», «Пирĕн юрă» кĕнекесенче халăхсене Октябрь уçса панă телей çулĕ тухса тăрать.

Выставка В. И. Агеевăн ăсталăхĕ малалла хăвăрт ӳссе пынине, вăл хăшпĕрисем час-часах асăнакан «тӳрĕн кăтартас», метафора е символ мелĕпе сăнлас тенине пачах пăхăнмасть, уншăн чи кирли — чĕрĕ сăнар тăвасси, пурнăç пуянлăхĕпе пахалăхне палламалла, уйăрмалла, унпа хавхаланма пултармалла уçса парасси. Çакна пĕлет вăл, чăннипех пултарать. Çавăнпа куракансен чун-чĕрине яланлăхах тыткăнлать.

**А. ГРИГОРЬЕВ.**

**Ӳкерчĕксем çинче: сулахайра — «Чувашские легенды и сказки» кĕнекери ӳкерчĕксем; сылтăмра — «Юратнă кĕнеке» хуплашки.**

Г. Зиньков фоторепродукцийĕсем.